# ПЕРЕМЕНКА




№ 11

ФЕВРАЛЬ, 2023

ШКОЛЬНЫЕ СОБЫТИЯ
********************************

Торжественное вручение знамени отряду им. А.Никонова……………………………………2
Наше творчество………...................................3-5

Школьная газета основана
в феврале 2022 года
Основатели:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна

# ПЕРЕМЕНКА





**18 февраля состоялось торжественное вручение знамени отряду юных друзей спецназа имени Александра Никонова. Торжественная церемония прошла на Слете воспитанников отрядов, клубов и объединений. Наставники пожелали школьникам успехов в учебе, быть всегда верными клятве, с гордостью носить форму юного спецназовца и своими делами, поступками служить нашему Отечеству.**



# ПЕРЕМЕНКА

# ПУЛТАРУЛĂХĂМĂР



**Кĕтнĕ парне**

Çĕнĕ çул уявĕ – çулталăкри чи чаплă та чи асамлă уяв. Ăна пур çын та чăтăмсăррăн кĕтет. Çак каç Раççей çĕр-шывĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан, тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăх тăван-пĕтенпе, хурăнташпа, тус-тантăшпа е çемьепе пĕр кĕрекене пуçтарăнать. Ташлать-юрлать, савăнать – пĕр-пĕринпе хутшăнать.

Эпĕ ку уява питĕ юрататăп. Ăна çемьепе сĕтел хушшинче кĕтсе илтĕмĕр. Апельсин-мандаринпа, тутлă салатпа, кукăль-икерчĕпе, анне пĕçернĕ тортпа, тутлă шерпетпе – тутлă апат-çимĕçпе - сăйлантăмăр.

Кăçалхи Çĕнĕ çул яланлăхах ман асăмра юлĕ. Хĕл Мучипе Юр Пике ĕмĕтĕме пурнăçларĕç – теттесемпе илемлетнĕ чăрăш айне тахçантанпах кĕтнĕ парне,  укулеле (пĕчĕк гитара), çитерсе пачĕç. Манăн кăмăл тулчĕ.

Вĕрентекенсене пурне те уяв ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп, шкул ачисене шкулта тăрăшса вĕренме, спортпа туслă пулма сĕнетĕп.

**Миронов Матвей, 6-мĕш класра вĕренекен**

**Ачалăх - хаваслă вăхăт**

Сисмесĕрех хĕл кунĕсем çитрĕç. Тавралăх шап-шурă юрпа витĕнчĕ. Çĕнĕ çул тапăртатса тăракан тур лашисем çине утланса аça çиçĕм пек вирхĕнсе çитсе кĕчĕ. Çанталăк сивĕтсе пăрахрĕ.

Хĕл Мучи питрен-куçран хыпашлать, сăмсаран чĕпĕтет, никама та хĕрхенсе тăмасть. Хĕл сивви те пире, ача-пăчана, киле хăваласа кĕртеймест.

Юлташсемпе тăвайккинчен çунашкапа, йĕлтĕрпе çил-тăман пек ыткăнатпăр, пăлтăр-палтăр йăванса каятпăр, тăрса юртан шакканатпăр та малалла чупатпăр, тĕрлĕ юрă-кĕвĕ ĕнĕрлетпĕр – ачалăхăн ырă, телейлĕ саманчĕпе савăнатпăр. Хаваслă вăхăта мухтатпăр.

**Ефимова Валентина, 6-мĕш класра вĕренекен**



**Шанчăклă юлташ пуласса шанатăп**

Манăн йытă çури пур. Вăл овчарка йăхĕнчен. Марс ятлă. Вăл хурарах çăмлă, тĕксĕм хăмăр куçлă.

Эпĕ ăна лайăх пăхатăп: тутлă çитеретĕп, çуса яратăп, çăмне типĕтсе туратăп.

Лавккана кайсан Марса вăл кăмăллакан апат-çимĕçе илсе пама тăрăшатăп, теттесем парнелетĕп.

Марс - ăслă йыт çури.  Эпĕ ăна тĕрлĕ команда пурнăçлама вĕрентетĕп. «Лар», вырт», «тыт», «хăвала», «сассуна пар» тенисене ăнланакан пулчĕ. Пĕр-пĕр япалана аякка персе ярсан та шăлĕпе çыртса çийĕнчех илсе килсе параять. Команда панă чух куçран чăр-чăр пăхать, çавăнпа та вĕсене тĕрĕс пурнăçлать.

Ӳссе çитсен Марс ырă кăмăллă, маттур йытă – шанчăклă юлташ – пуласса шанса тăрас килет.

**Куликова Дарья, 6- мĕш класра вĕренекен**



ПЕРЕМЕНКА

# ПУЛТАРУЛĂХĂМĂР





**Паттăр ентешĕмĕр ятне илтĕмĕр**

Мана Аня Тимофеева тесе чĕнеççĕ. Эпĕ 6-мĕш класра вĕренетĕп. Кăçалхи раштав уйăхĕнче эпир те çамрăк патриотсен йышне тăтăмăр. Пирĕн отряд А.В. Никонов ячĕпе хисепленсе тăрать.

А.В. Никонов – çар çынни, Раççей Федерацийĕн «Барс» ятпа çӳрекен 26-мĕш ятарлă отряд разведчикĕ, Украинăра пулса иртекен спецоперацие хутшăнса пуçне хунă. Çапăçура хăюлăх кăтартнăшăн Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă.

Кам-ха вăл патриот? Ман шухăшпа, патриот вăл – Тăван çĕр-шывăмăра чунтан-чĕререн парăнса юратакан, уншăн яланах кар! тăма пултаракан çын. Эпир те, улттăмĕш класра вĕренекен 19 ача, атте-анне, вĕрентекенсем, хăнасем умĕнче присяга патăмăр, таса чунлă, шанчăклă юлташ пулма, шкул чысне çӳллĕ шайра тытса пыма, аслă Раççейшăн, тăван Чăваш Еншĕн тӳр кăмăлпа ĕçлесе пурăнма, тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăрсен ячĕсене яланах асра тытма, Раççейăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулма тупа турăмăр, хамăр пултарулăхпа паллаштартăмăр.

Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв? Тăван çĕр-шыв вăл – тăван атте-анне, тăван кил, тăван шкул, тăван ял, тăван чĕлхе, тăван халăх…

Эпĕ, Аня Тимофеева, 6-мĕш класăн командирĕ, тантăшăмсене чĕнсе çапла калатăп: Тăван çĕр-шывăмăрăн тивĕçлĕ гражданĕсем пулма шкул саккинченех пуçлар, спортпа туслă пулар, вĕренӳре лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пырар, атте-аннене пулăшар, ваттисене хисеплер! Çапăçура хăюлăх кăтартса Крап беретне тата Паттăрлăх орденне тивĕç пулнă ентешĕмĕрĕн - А.В. Никоновăн - хисеплĕ ятне çӳллĕ шайра тытар!

**Тимофеева Анна, 6-мĕш класра вĕренекен**

# ПЕРЕМЕНКА

# ПУЛТАРУЛĂХĂМĂР



## Çĕнĕ çул уявĕ – асăмра

Раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче шкулта Çĕнĕ çул уявĕ иртрĕ. Кам кăна пуçтарăнмарĕ пулĕ капăр симĕс елка тавра: виçĕ пуçлă çĕленĕ те, юр пикисем те, патша майрисем те, Ниндзя та, кашкăрĕ те, тилли те, упи те, кушакĕ те… Тата мĕн чухлĕ кролик - мулкач!!! Çак кун эпир, ача-пăча, юмах тĕнчине кайса куртăмăр. Хĕл Мучипе Юр пикепе пĕрлех тата хăнара Вилĕмсĕр Кощей, Тухатмăш карчăк, Юр кĕлетке, Шыв патши пулчĕç.

Эпĕ Вилĕмсĕр Кощей сăнарне вылярăм, пирĕн класри Аркадий Большаков – Шыв патши, Надежда Иванова – Юр кĕлетке, Дарья Куликова – Тухатмăш карчăк ролĕсенче пулчĕç. Эпир тантăшсемпе питĕ хытă тăрăшрăмăр - ачасене тĕрлĕ вăйă выляттартăмăр Кĕçĕнрех класра вĕренекенсем пирĕн çине тĕ-ĕ-лĕнсе пăхрĕç. Хăшĕсем тÿрех паласа та илеймерĕç пулас.

Уяв питĕ хаваслă иртрĕ. Илемлĕ чăрăш тавра алла-алăн тытăнса пурте ПĔРЛЕ юрларăмăр, ташларăмăр, сăвă каларăмăр. Хĕл Мучипе Юр пике кучченеçпе хăналарĕç.

**Давыдова Наталья, 6- мĕш класра вĕренекен**

## Кустăрмаллă «урхамах»

Манăн хăвăрт каякан велосипед пур. «STELS» ятлă. Ăна наклейкăсемпе илемлетнĕ. Велосипедăн 21 передача, дисклă тормоз, ароматизатор пур. Мана ăна аттепе анне Çуралнă кун ячĕпе парнелерĕç.

Велосипед – шанчăклă тус. Çак велосипедпа пысăк хăвăртлăхпа çÿреме пулать. Атте-анне лавккана кайса килме хушсан çил пек вĕçтерсе кайса килетĕп.

Е вăрмана кăмпа-çырлана кайса килмелле-и, е кĕреплепе аякри уя утă пуçтарма каймалла-и, е шăрăхра юнашар ялти пĕвере чăмпăлтатмалла -и – çуран çÿресе вăхăта сая ямастăп. Шик! шăхăратăп кăна – ик кустăрмаллă урхамахăм ман умра тăра парать: утлан та яра пар.

Пушă вăхăтра ачасемпе ăмăртмалла ярăнатпăр. Çул çинчи хăрушсăрлăх пирки те манса каймастпăр, правилăсене яланах асра тытатпăр.

**Федоров Кирилл, 6- мĕш класра вĕренекен**







## Шухăша яракан хайлав

Эпĕ çиччĕмĕш класра вĕренетĕп. Чăваш çыравçисен хайлавĕсене вулама юрататăп. Нумаях пулмасть Г. Лучăн «Чун туйăмĕ» ятлă калавĕпе паллашрăм. Мĕнпе тыткăнларĕ-ха вăл мана?

Хайлавра шăпах пирĕн çулхи шкул ачисем пирки каласа кăтартнă. Светлана сăнарĕ урлă çула çитмен хĕр-упраçăн асамлă, ачаш та черчен, чуна ыраттаракан туйăмĕ – пĕрремĕш юрату – пирки çырнă. Нинăпа Валя сăнарĕсем урлă вара автор пире çĕр çинче кĕвĕç чунлă, киревсĕр шухăш-туйăмлă çынсем те пулма пултарасса асăрхаттарса хăварнă.

Çак икĕ хĕр Светланăн дневникне ыйтмасăрах илсе вуланă, Светланăпа Слава пирки япăх сăмах сарнă. Светланăн чун туйăмне вăрланă, чирлеттерсе янă.

Г. Луч çамрăксен шалти туйăмне психолог евĕр, тарăннăн тĕпченĕ. «Çыннăн таса та ачаш чун туйăмне – юратăва – сĕмсĕррĕн таптаса вараламалла мар», - тесшĕн пулнă чăваш çыравçи.

**Елена Смирнова, 7- мĕш класра вĕренекен**







# ПЕРЕМЕНКА

# ПУЛТАРУЛĂХĂМĂР

**Анне пит-куçĕнче яланах йăл кулă вылятăр!**

«Кам пире ачашшăн лăпкать пĕчĕкрен. Чипер çын тăвасшăн çунать чĕререн?» Кам-ха вăл, ачасем? Паллах, аннемĕр.

Анне пире пурнăçпа савăнса пурăнма, таса та ырă чунлă, чăтăмлă пулма вĕрентет. Эпир тунă çитĕнÿсемшĕн савăнать, пирĕншĕн чун-чĕререн пăшăрханать. Ачи-пăчи чирлесен миçе каç çывăрмасть-ши тата?

Эпĕ аннеме юрататăп. Вăл маншăн юлташ та, вĕрентекен те. Пурнăçри савăнăç, хĕвел пайăрки. Такăнса ÿксе урана ыраттаратăп-и – анне патне ачашланма чупатăп. Анне, сурана пĕр-иккĕ вĕрсе илет те, вăл пулманпа пĕрех – иртсе те кайнă. Тĕрĕслев ĕçĕпе «5» паллă илетĕп-и – савăнăçа аннепе пайлатпăр. Аннен çемçе те ачаш алли пуçа сĕртĕнсенех пĕтĕм хуйхă-суйхă иртсе каять, тĕнчере лайăххи кăна тăрса юлать.

Эпир, йăмăкпа иксĕмĕр, пур ĕçре те аннене пулăшма тăрăшатпăр: чашăк-тирĕк çăватпăр, урай сĕретпĕр, апат-çимĕç пĕçеретпĕр.

Анне пит-куçĕнче яланах кулă вылятăр!

**Родионова Дарья, 7- мĕш класра вĕренекен**



**Туслăх пытăр ĕмĕре**

«Юлташу хăвăнтан лайăхрах пултăр», - тенĕ чăваш сĕм авалтан. Чăн сăмахăн суйи çук.

Манăн тусăм юнашар ялта, Кăмаш ялĕнче, пурăнать. Ăна Аркадий ьесе чĕнеççĕ. Аркадий вăтам пÿллĕ, кĕрнеклĕ хул-çурăмлă арçын ача. Куçĕ тĕксĕм хăмăр, çын çине ăшшăн кулса пăхать. Çÿçĕ тĕксĕм çырă, кăшт явăнарах парать. Сасси, йĕс шăнкăрав пек, юрланă чух уçă та илемлĕ. Ăна катаранах уйăрса илме пулать.

Эпир Аркадийпе мĕн пĕчĕкрен туслă. Пĕр парта хушшинче ларатпăр. Хамăра кăсăклантаракан ыйтусене яланах пĕрле сÿтсе яватпăр: задача шутлатпăр, сочинении çыратпăр, проектсем хатĕрлетпĕр. Киле çитсен те пĕр-пĕрин патне «Контактра» социаллă сетьре хĕрÿллĕ салам яратпăр, хутшăнатпăр.

Аркадий лăпкă ача. Мĕн ыйтнине тĕплĕн ăнлантарса парать. Ĕçчен, ĕçе шухăшласа, тирпейлĕ тăвать. Мăннисем мĕн ыйтнине çийĕнчех пурнăçлать.

Мана тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерет. Тутлă пĕçерет, никам пулăшмасăрах ашшĕ-амăшне, йăмăкне пылак апат-çимĕçпе сăйлать: тортпа, пироженнăйпа, пан улми куклипе… Хуть те мĕнле ĕçе те ал ларать. Технологи урокĕсенче Аркадий ăсталанă япаласем яланах тĕслĕх вырăнĕнче.

Юлташăм ырă кăмăллă, маттур. Мана яланах канаш парса пулăшать, «тăваллах» туртать. Эпĕ ăна хисеплетĕп. Пирĕн туслăх ĕмĕре тăсăласса шанатăп.

**Иванов Игорь, 6- мĕш класра вĕренекен**

